*Паллă çынсен пурнăçĕнчен*

# "КЛАССИК" (пире халĕ те тĕлĕнтерекен Чулкаç)

***"Тантăш" хаçатăн 2005 çулхи 34-мĕш номерĕнче /çурла уйăхĕн 25-мĕшĕ/ Петĕр Çăлкуç писатель "Лапшу Çтаппанĕ – Степан Лапшин" статья пичетленĕччĕ. Хăй вăхăтĕнче "Сунарçă халапĕсен" авторĕпе эпĕ пĕр хутчен мар тĕл пулса калаçнă. Кун пирки аса илсе çырни те сыхланса юлнă. Çавна май çак эссе те пĕчĕк вулакансене кăсăклантарассăн туйăнать.***

**АВТОР.**

Чи малтанах эпĕ Лапшу Çтаппанĕ çинчен Ваня тантăшăмран илтнĕччĕ. Пĕррехинче вăл пире чаплă сунарçă пирки юмахсем вуланине пĕлтерчĕ. Эпир хистесе ыйтнипе хăшне-пĕрне каласа та кăтартрĕ. Питех те тĕлĕнтернĕччĕ çав хайлавсем. Хамăн та вулас килсе кайрĕ çав кĕнекене. Анчах вăл алран алла çÿренипе çĕтĕлсе пĕтнĕччĕ ĕнтĕ. Унăн хуплашки те, вĕçĕ те çукчĕ. Пур пек халапĕсене часах черечĕпе сывламасăр тенĕ пек вуласа тухрăмăр.

Пирĕн тантăш çав чаплă кĕнекене кам çырнине те пĕлет. Куçма Чулкаç писатель иккен. Часах эпĕ ун çинчен мăннисем калаçнине те илтрĕм. Пиртен темиçе кил урлă çеç пурăнакан колхоз председателĕ, хыткан питкуçлă та çÿллĕ пÿ-силлĕ Иван Ильич Сайдашев калană тăрăх, пĕррехинче, Атăл пăрахучĕпе инçе çула кайсан, вăл Куçма Чулкаçа тĕл пулнă имĕш. "Лапшу Çтаппанĕ" авторĕ калаçма та шÿт тума юратаканскер, пĕчĕк çеç чăваш", – терĕ хайхи.

"Лапшу Çтаппанĕ" кайран "Сунарçă халапĕсем" ятпа темиçе хутчен те çапăнса тухнă. Анчах юмахсене чылай вăхăт хушши çаплах тупаймасăр пурăнтăм. 1956 çулта Шупашкара пырсан, ман телее, Чăваш кĕнеке издательствинче çав çул пичетленнĕ çĕнĕ кĕнекесем хушшинче "Сунарçă халапĕсене" курсан калама çук савăнтăм. Шăпах çавăн чух унăн авторĕпе те çывăх паллашма тÿр килчĕ. Асăннă кĕнеке халĕ те тĕрĕс-тĕкел упранать. Унта писатель автографĕ те пур: "Анатолий Федорович Ермилова – Ульяновск облаçĕнчен çамрăк авторсен канашлăвне килнĕ сăвăçа асăнмалăх парнелетĕп.

Автор Куçма Чулкаç.
6, ноябрь, 1956.
Шупашкар хули".

Ун чухне Куçма Чулкаç Радиовещанипе телевидени комитетĕнче литература передачисен редакторĕнче ĕçлетчĕ. Çавна май литературăна тин çеç кĕрекен çамрăк авторсене ятарласа передача хатĕрлес шутпа пухрĕ. Йышлăн пынăччĕ Писательсен союзĕпе пĕр çивитти айĕнчех вырнаçнă радиокомитетăн шурă чул керменне. Çавăн чух çывăх паллашрăм та чаплă юмахсен авторĕпе.

Шупашкартан тата çывăх районсенчен пынă çыравçăсем хăйсен сăввисене пленка çине çырса илнĕ хыççăн, килнĕ пекех хăвăрт саланса пĕтрĕç. Мана, аякран килнĕскерне, Куçма Чулкаç хăйĕн хваттернех илсе кайрĕ. Ун патĕнче "Сунарçă халапĕсен" малтанхи кăларăмĕсене алла тытсах куртăм. Малтанхи кăларăмра "Юратнă хĕрĕме, Вальăна" текен халал йĕркисем те пур. Валя – писателĕн аслă хĕрĕ-мĕн. Кузьма Афанасьевич калană тăрăх, вăл кĕнекесем сутнă çĕрте ĕçленĕ. "Растрата тунăшăн" тесе ăна... 25 çула хупса лартнă. Ларасса Ульяновск хулинчи тĕрмере ларать иккен. Тен, çамрăк сутуçăн айăпĕ те пулнă пуль. Анчах та тепĕр чух пуç касакансене те çăмăлрах айăпласçĕçке? Эпĕ ун чух Сталинăн репресси машини епле ĕçленине тĕшмĕртсех çитерейменха, çавах та писатель хĕрне шутсăр "пысăк срок парса" айăплани тарăн шухăша ячĕ. Çакăн хыççăн кивĕ йывăç çуртри пысăках мар пÿлĕмре чухăнлăхра тертленсе пурăнакан çыравçăпа унăн килйышне уйрăмах шеллесе пăрахрăм. Хваттерĕнче кивĕ сĕтел-пукан, студентсенни пек тĕпне хăма сарнă черченкĕ икĕ тимĕр кравать, тÿшекçытарĕ те хулăнах мар... Пÿртре те асăрханса çеç çÿремелле: хытăрах ярса пусмассерен урай хăмисем аванса, чĕриклетсе илеççĕ. Кунта писатель пурăннине кĕнекесемпе тата хутсемпе тулса ларнă этажерка çеç аса илтерет.

Çавах та урамри хула пурнăçĕ ун чухне кичемех марччĕ темелле. Кашни 20-30 утăмран тенĕ пек çимĕçсемпе тулса ларнă ларексем ĕçлеççĕ... Асăннă кун кÿршĕри "Атăл" ресторана кĕрсе сăйлантăмăр. Ирхине ятлă-сумлă кил хуçи аптранă. Мăшăрĕ çук-çук та – тăн кĕртсе илет. Хăйĕн айăпне тахçанах ăнланнăскер, Кузьма Афанасьевич ăна "Сантăр" тесе çех тăрать. Мăшăрне çапла чĕнетчĕ вăл.

Мĕн тăвас тетĕн, писатель те çынах. Çавах та меллĕ самант тупса ăна "Лапшу Çтаппанĕн" историйĕ çинчен каласа кăтартма ыйтатăп. Чăнах та, питĕ пĕлес килетчĕ. Телее, Кузьма Афанасьевич нумай кĕттермерĕ. Хаçатçă йăлипе писатель каланине çырса пырас килет. Анчах хут татки те пулин çук. Мĕн тăвас? Ал айне "Ялав" редакторĕ Георгий Ефимов поэт çĕнĕрен ĕçлеме тавăрса панă "Телей сăпки" поэма лекрĕ. Ăна машинкăпа лайăх хут çине пĕр енлĕн пичетлесе кĕнеке пек çĕленĕ. Эппин, тепĕр енне чиперех

çырма май пур. Çапла турăм та. Писатель каланисене, татăкăн пулин те, çырса пыма тăрăшрăм. Çитменнине çийĕнчех редакцилеме тӳр килмерĕ, ĕçе ялан ырана хăварса пытăм. Халĕ акă унтанпа хĕрĕх çул та çитет. Вăхăтлăха тесе çырнă сăмахсене уйăрса кăларма та йывăр. Çавах та чăваш ачапăча литературине чăннипех те классикăллă хайлав пулса кĕрсе юлнă "Лапшу Çтаппанĕн" авторĕ каланă сăмахсене тепĕр хут аса илни халĕ пурсăмăра та кăсăклантарассăн туйăнать.

– Ку юмахсем вĕсем пĕрре ларса çырнă япаласем мар, - тесе пуçларĕ хăйĕн сăмахне Куçма Чулкаç. – Кашни юмахĕ пурнăçра пулса иртнĕ тĕрлĕрен ĕç-пуçпа çыхăннă. Сăмахран, "Çăка хăвăлĕнче ларсах арăслана чĕрĕлле тытрăм" ятли атте Канаша кайсан арăслан курнипе çыхăннă.

"Ямаш вăрманĕнчи ăсансене пурне те хам хыçран ертсе килтĕм" юмаха çырас умĕн Н.Янгас поэтран "консультаци" илме тиврĕ. Пĕррехинче унăн хваттерне пырсан: "Ăсан мĕн çиет?" – тесе ыйтрăм. "Çуркунне – хурăн кăчки, кĕркунне – пилеш", – терĕ çакскер. Çавнашкал "информаци" те çителĕклĕ пулчĕ.

Епле юмах пултăр-ха вăл улăпсăр? "Сунарçă халапĕсенче" те Лапшу Çтаппанĕ тĕлĕнмелле курăк çисе улăп пек ӳссе кайнине çырса кăтартнă. Шупашкарта Михаил Ефимович Ефимов преподаватель пурччĕ. Вăл пединститутра педагогика çинчен лекцисем вулатчĕ. Пĕррехинче хăйĕн лекцийĕнче "Стыдливая мимоза" текен чечеке аса илчĕ. Унăн вăррине çисен организм ӳссе каять имĕш. Ытти-хытти фантази. Хур кайăксем тытни çинчен калакан юмах сюжечĕ çуркунне Атăл хĕррине ансан çуралчĕ. Кайăк хурсем питĕ йышлăччĕ çав çул...

"Симĕс пасар" тетпĕр. Вăл ăçта иккенне пĕлетĕн ĕнтĕ эсĕ. Унта пĕр хĕрарăм кĕвенте туяннă. Кĕвенти хуçăлса кайрĕ... Сутаканни: "Эпĕ кашкăр тытнă", – тет хăйне ятлакан хĕрарăм умĕнче тӳрре тухса. Çакăн хыççăн Лапшу Çтапанне те "кашкăр тыттарас" килчĕ. Анчах мĕнле тытаççĕ-ши ăна? Хумма Çеменĕнчен ыйтрăм. "Шупашкарта Иван Андреевич Шевле сунарçă пур, – тет çакскер. – Çавăнпа калаçса пăх-ха". Çапла вара тата икĕ сюжет çуралчĕ.

Пăсара тата куян мыскарисем – хамăр Ямаш ялĕнче пулса иртнĕ ĕçсем. Пĕр çулхине куянсем хурама вуллисене кăшласа янăччĕ...

1935 çулта Янкас ялне командировкăна ячĕç. Ун чухне Нестер Кириллович çуртĕнче ял Совечĕ вырнаçнăччĕ /вĕсене раскулачить тунă/.

– Писательсем килсе çӳреççĕ... Ман çинчен пĕр кĕнеке çырасчĕ, – тет пĕри.

– Эс кам пулатăн вара?

– Эпĕ Лапшу Çтаппанĕ, – терĕ çакскер.

Çынни вăл ун чухне конюх пулса ĕçленĕ. Ватă çын. Сакăр тиха пăхнă. Сунарçă мар. Çав кун эпĕ ун патне хваттере кайрăм. Ара, уçă кăмăлĕ мана питĕ килĕшрĕ те...

– Чăнах Лапшу Çтаппанĕ-и эсĕ? – ыйтрăм тепĕр хут килне пырса кĕрсен.

– Çаплах, ара, – пулчĕ хурав.

– Сирĕн почта ăçта? – тĕпчетĕп унран çын улталаманнине курса. Хам типографие шăнкăравлама васкарăм. Кил хуçи мана виçĕ тенкĕ укça парса ячĕ çыхăну расхучĕсене тӳлеме. Хам вара "Пионер сассине" шăнкăравласа наборласа хунă сунарçă ятне улăштартăм – Лапшу Çтаппанĕ. Малтан Йĕксĕк Хветĕрĕ ятлăччĕ вăл.

Çапла. Кĕнекери персонаж ячĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. "Сунарçă халапĕсенчи" тĕп персонажа Йĕксĕк Хветĕрĕ теме халĕ ниепле те чĕлхе çаврăнмасть. Вăл вара çапла юлма та пултарнă-çке. Паллах, ун чухне çав юмахсем чылай чухăнланĕччĕç. Телее, Лапшу Çтаппанĕ парне пек тупăннă. Чее те усал кăмăллă çынна йĕксĕк теççĕ чăвашсем. Чулкаç кĕнекинчи сунарçă юптарма юратать пулин те, начар çын мар, пачах урăхла, тӳрĕ кăмăллă та тĕрĕслĕхе питех те хисеплекен, ыттисене сума суса юратаканскер. Юптарса вăлтасси те унăн пурнăçа юратнипе, халăх шӳчĕпе çыхăннă. Тĕнче литературине илес пулсан, çакнашкал сăнарсенчен чи малтан Мюнхгаузен барон аса килет. Анчах чăваш писателĕ унăн витĕмĕнчен тухса, халăх уйрăмлăхне сыхласа хăварма пултарнă. Лапшу Çтаппанĕ чунĕпе те, ăсĕпе те чăн чăваш. Вăл ял çыннисен пурнăçĕпе пурăнать, вĕсен йăли-йĕркине тытса пырать. Хăй çуралса ӳснĕ тавралăха, çут çанталăк пуянлăхне чунтан юратать, тивĕçлипе хаклама пĕлет. Çапла вара писатель халăх чысне тивĕçлĕ, унпа чунĕпе те, юнĕпе те çыхăннă сăнар тума пултарнă. Çавăнпа вăл пире хаклă та...

Çакăн хыççăн Шупашкара пырса çӳремессерен Куçма Чулкаç патĕнче чарăнаттăм. Ара, хăна çуртне кĕрсе выртма укça-тенкĕ хĕсĕкрехчĕ. Пĕррехинче çапла, çуллахи ăшă кун, урама тухатпăр. Сасартăк Кузьма Афанасьевич кĕрнеклĕ ар çынна курса чылайччен ăшшăн калаçать. Каярахпа пĕлтĕм – Ку Петр Осипов иккен, врач, паллă драматург, артист, сĕрме купăс ăсти... Кузьма Афанасьевич мана çав кун Шупашкар урамĕсемпе чылайччен ертсе çӳрерĕ. Палланă çын нумай унăн. Ăçта кăна кĕрсе тухмасть. Яра куна çӳресе хăшкăлнă хыççăн тин килне канма пырса кĕрет. Манăн ирхине ирех киле кайма пуçтарăнмалла. Кунхинче манпа пĕрле Ульяновска çити Кузьма Афанасьевичпа унăн мăшăрĕ те пуçтарăнаççĕ, вĕсем тĕрмери хĕрне çитсе курасшăн, ун валли кучченеçсем çыхса хатĕрленĕ...

Кузьма Афанасьевич радиора ĕçленĕрен кашни пымассерен мана черетлĕ передача валли çырса илме тăрăшатчĕ. Аякра пурăнакан чăвашсен тунсăх сăмахĕ хамăн та кашнинчех тупăнса тăратчĕ. Пĕррехинче вăл мана эпĕ ыйтнипе Г.Лебедев композиторăн "Савниçĕм" юррине пленка çине çырса парнеленĕччĕ. Кайран эпĕ ăна вырăнти радиопа эфира кăлартăм.

Аслăраххисем ас тăваççĕ ĕнтĕ, çыравçăсем К.Чулкаçа куç умĕнчех "Классик" тетчĕç. Шӳтшĕн çилленместчĕ вăл, кулса илетчĕ кăна. Мĕн пур классик çинчен халăх хушшинче анекдочĕ те çӳрет. Куçма Чулкаç пирки хайланисем те сахал марччĕ хăй вăхăтĕнче. Илтнисем ăна та ас тăваççех. Хăшĕпĕри вĕсене хăй умĕнчех каласа кулнисене те курнă эпĕ. Шӳтлĕ сăмахра чăнни те пулнах çав. "Лапшу Çтаппанĕ" авторĕ ырă сăмаха чăннипех те тивĕçлĕ. Ун пек чаплă япаласем куллен çырăнмаççĕ.

**Анатолий ЮМАН,**
**писатель, РФ культурăн**
**тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**